Шкулсен пурнăçĕнчен

# Тăван шкул – 125 çулта

**ПУÇЛАМĂШĔ ÇАПЛА ПУЛНĂ**

Пирĕн Шетмĕпуç шкулне 1929 çулта уçнă, 70 çулхи юбилейĕ çитет тесе пурăнаттăмăр. Çав тапхăрта «Халăх шкулĕ» журналăн 1998 çулхи тăххăрмĕш номерĕнче тĕп архив сотрудникĕсем хăйсен çĕр çулхи юбилейне паллă тумалли республикăри шкулсен списокне пичетлесе кăларчĕç. Унта Муркаш районĕнчи Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкула та асăннă. Ку пирĕншĕн пуриншĕн те кĕтменлĕх пулчĕ. Республикăри тĕп архива çул тытрăмăр. Вун-вун документпа паллашнă хыççăн çĕр çул тултараканĕ пирĕн шкул мар, Трак тăрăхĕнчи (Красноармейски районĕ) Кĕçĕн Шетмĕ шкулĕ пулни палăрчĕ, ăна 1898 çулта уçнă иккен.

Архива татах та татах çитме тиврĕ. Шетмĕпуç шкулĕ çинчен калакан документа тупрăмăрах. Етĕрне уесне кĕрекен Хусан эпархи училищин канашĕн докуменчĕсен «Етĕрне уесĕнчи чиркӳ прихут шкулĕсемпе грамота шкулĕсен 1901 çулхи пурнăçĕ» ĕçре Шетмĕпуç шкулне уçни пирки çакăн пек асăнни пур: «Шетмĕпуç ялĕнчи хĕр ачасемпе арçын ачасем вĕренмелли грамота шкулне 1884 çулта уçнă». 1902 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, шкулта ачасен йышĕ сахал тесе, Шетмĕпуç шкулне хупнă. Шкул тепĕр хут Матрена Архипова килĕнче уçăлать. Учитель пулса Иван Филиппов ĕçленĕ.

1928 çулта Шетмĕпуçĕнчи шкулта ĕçлемешкĕн Элĕк уесĕн ĕç тăвакан комитечĕн председателĕ Никитин сĕннипе Павлов Семен Павловича яраççĕ. Семен Павлович 1921 çулта Етĕрнери учительсем хатĕрлекен виçĕ çуллăх шкултан вĕренсе тухнă. Вăл шкул заведующийĕн ĕçĕсене туса пынă. Унпа пĕрле ачасене Петр Николаевич Николаев вĕрентет.

Атăл урлă Йăлăм вăрманĕнчен пĕренелĕх йывăç касса турттараççĕ. 1929 çулта шкул çуртне купаласа лартаççĕ. Шетмĕпуçĕнчи пĕрремĕш пусăмри тăватă çул вĕренмелли шкул тенĕ ăна.

**ПАЯНХИ ШКУЛ**

Шетмĕпуç шкулĕн паянхи пурнăçĕпе шкул директорĕ Антонина Владимировна Степанова паллаштарать:

– Эпĕ Шетмĕпуç шкулĕнче 1986 çултанпа ĕçлетĕп. Ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентетĕп. 1996 çултанпа шкул ертӳçи.Çак тапхăрта шкул пурнăçĕнче чылай ырри пулса иртрĕ. Пурнăçпа тан утма, вĕрентӳ ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсемпе туллин усă курма тăрăшатпăр. 1997 çултанпа хуçалăх расчечĕпе ĕçлетпĕр. Шкулăн 15 гектар çĕр пур, ăна арендăна патăмăр. Шкул ачисемпе кĕркунне çĕр улми пуçтарса укçа сахал мар ĕçлесе илетпĕр. Пуян сад пахчи пур. Улма-çырла, пахча çимĕç тухăçĕ çулленех савăнтарать. Хамăра столовăйĕнче çимелĕх те, ял халăхне сутса укçа тумалăх та çитĕнтеретпĕр вĕсене çу каçипе ачасен вăйĕпе. Шкулăн теплица пурри – тепĕр тĕкĕ. Симĕс сухан, пахча çимĕç калчи, чечек ӳстеретпĕр. Пухăннă тупăш тĕрлĕ ĕç хатĕрĕ туянма, хамăр вăйпах юсав ĕçĕсем ирттерме, шкула тирпей-илем кĕртме каять.



1980-1995 çулсенче Шетмĕпуç шкулĕнче ĕçленĕ учительсем.

Шкулта 101 вĕренекен, ача сачĕн ушкăнĕ те ĕçлет, хатĕрленӳ класĕ те пур. 14 вĕрентекен ĕçлет Шетмĕпуç шкулĕнче. Вĕсенчен пĕри аслă категориллĕ, пĕрремĕш категориллисем иккĕн. Учительсенчен иккĕшĕ Раççей Вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ, тăваттăшĕ – Раççей вĕрентӳ ĕçĕн хисеплĕ ĕçченĕсем.

Шетмĕпуç шкулне районта та, республикăра та ырăпа пĕлеççĕ. Эпир вĕрентӳ учрежденийĕсем хушшинче иртекен чылай конкурса хутшăнса çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕмĕр. «Çулталăк шкулĕ» конкурса хутшăнса шкул çумĕнчи хушма хуçалăха аталантарас енĕпе, ачасене тавра пĕлӳ ĕçне явăçтарас енĕпе тата вĕренекенсене санитарипе гигиена тĕлĕшĕнчен воспитани парас енĕпе çĕнтерӳçĕсем пулса дипломсемпе хаклă парнесем илме тивĕç пултăмăр. Пирĕн шкула Чăваш Республикин вĕрентӳ министрĕ Г. Чернова килсе чыс турĕ.

Шкултан вĕренсе тухнă çамрăксем Шупашкарти, Мускаври, Санкт-Петербургри тĕрлĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсенче пĕлӳ илеççĕ. Ĕçре ырă ята тивĕçнисем вуншарăн. Тивĕçлипе мухтанатпăр вĕсемпе: Раççей Геройĕ Евгений Борисов, ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем А.П. Петров, К.Ф. Фомин, Ф.С. Серафимов, суту-илӳ ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ А.Н. Смирнов, Чăваш Республикин сывлăха сыхлас ĕçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем В.И. Алексеева, Л.А. Ладыкова тата ыттисем те. Пурне те асăнса та пĕтереймĕн. Нумаййăн вĕсем.

Уйрăмах шкулта тĕрлĕ вăхăтра ĕçленĕ учительсене тав сăмахĕ калас килет. Вĕсем чăннипех те ырă ята тивĕç. Мăн Турхан ялĕнче пурăнакан А.А. Архипова, Г.С. Павлова, А.И. Иванова, Т.Д. Ефимова, Сарчакри Е.И. Ильина, Шетмĕпуçĕнчи А.Е. Краснов, Г.К. Павлова, Н.Д. Дмитриев, Шупашкарта пурăнакан А.П. Платонова учительсем мĕн ĕмĕр тăршшĕпех шкулта ĕçленĕ, çитĕнекен ăрăва ăс-тăн панă.

Çĕнелет шкулăмăр. Компьютер класĕ пур, Интернетпа çăмăллăнах усă куратпăр. Шкул библиотеки пуян. Шыра, туп, вĕрен, ан ӳркен кăна. Иртнĕ çул «Газель» автомашина та çитрĕ шкула. Халĕ Опрыскъяль, Автанкасси, Мăн Турхан, Сарчак ачисем шкула çуран çӳремеççĕ.

Ачасемшĕн тăрăшаççĕ кунта, ачасемшĕн пурăнаççĕ.

**Шетмĕпуç шкулĕнчен вĕренсе тухнисем! Апрелĕн 25-мĕшĕнче сире пурне те шкула уçнăранпа 125 çул çитнине уявлама чĕнетпĕр. Ырă сунса кĕтетпĕр, килĕр! И. РАЕВСКАЯ.**

Спорт хыпарĕсем



**Пĕрремĕш хут ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов пуçарнипе 50 çул тултарнă арçынсем хушшинче волейболла выляссипе ăмăртусем иртрĕç.**

**Арçынсем паян хĕрарăмсенчен сахалрах пурăнаççĕ. Тĕрлĕ чир-чĕр, сиенлĕ йăласем вĕсен сывлăхне палăрмаллах хавшатаççĕ, ĕмĕрне кĕскетеççĕ. Сывă пурнăç йĕркине тытса пыни ар сывлăхне упрама, унăн хастар тапхăрне вăрăмлатма май памалла. Урăхла çĕршыври демографи ларăвне татса пама çук.**

**Ăмăртăва арçынсен 5 команди хутшăнчĕ. Çивĕч кĕрешӳре Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн команди (сăн ӳкерчĕкре) çĕнтерчĕ. Иккĕмĕшĕнче – Уйкас Янасал ял тăрăхĕн команди. Виççĕмĕшне Муркашри больница ĕçченĕсен команди тивĕçрĕ.**

## Муркаш райпо команди çĕнтернĕ

Апрелĕн 18-мĕшĕнче Муркашри Спорт çуртĕнче ĕç коллективĕсен спартакиади майĕпе сĕтел çи теннисĕпе ăмăрту иртнĕ. Пурĕ 6 команда вăй виçнĕ. Çĕнтерӳçĕ вара Муркаш райпо команди пулса тăнă. 2-мĕш вырăнта – «Виват» общество, 3-мĕш вырăнта – Шетмĕпуç ял тăрăхĕн команди. Уйрăм кăтартусемпе арçынсенчен В. Павлов (райпо команди), хĕрарăмсенчен А. Никитина («Виват») мала тухнă.

## Ăмăртура – ишекенсем

«Сывлăх» ФСК-ра иртнĕ шăмат кун ишес енĕпе пысăк ăмăрту иртрĕ. 80 шкул ачи тата ĕçлекенсем 20-ĕн хутшăннă унта. Тĕрлĕ дистанцисенче шкул ачисем хушшинче çаксем мала тухнă: А. Авдеева (Муркаш шкулĕ), А. Леонтьева (Муркаш лицейĕ), Р. Иванов (Муркаш лицейĕ), А. Авдеев (Муркаш шкулĕ). Муркаш шкулĕнче вĕренекен чи çамрăк ишекенсене Н. Потаповăна, Е. Авдеевăна, М. Потапова тата Р. Куликова ятарлă грамотăсемпе медальсем парса хавхалантарнă.

Ĕçлекенсен хушшинче вара Л. Плечовапа (шалти ĕçсен пайĕ) И. Смирнова («Моргаушская» МСО) çитекенсем пулман. Эстафетăра 1-мĕш вырăна «Сывлăх» ФСК команди тухнă. Хыççăнхи вырăнсенче – «Моргаушская» МСО тата районти шалти ĕçсен пайĕн командисем. Çĕнтерӳçĕсем пурте грамотăсемпе медальсене тивĕçнĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

**ТСЖ «ЮГ » Моргаушского района объявляет комиссионный отбор предприятий и организаций по капитальному ремонту многоквартирных домов на 2009 год:**

| Место выполнения работ (адрес многоквартирного дома) | Объем работ (площадь объекта, кв.м.) | Краткое описание работ | Стоимость работ, руб. | Сроки выполнения работ |
|---|---|---|---|---|
| д. №5 по ул. Южная в с. Моргауши | 220 | Ремонт крыши | 265441 | После заключения договора в течение двух месяцев |

**Документы для участия в комиссионном отборе принимаются в запечатанном конверте не позднее 9.00 ч. 12.05.2009 г. Дата вскрытия конвертов: в 10.00 ч 12 мая 2009 года. Подведение итогов комиссионного отбора в 10.00 ч. 15 мая 2009 года.**

**Обращаться в комиссию по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, каб. 207 тел. 62-4-39.**

**Подробная информация на сайте morgau@cap.ru**

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:110301:119, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, территория землепользования СПК «Восток», участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:110301, площадью 6000 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:110301:120, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, территория землепользования СПК «Восток», участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:110301, площадью 6000 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

Участник долевой собственности Иванов Валерий Афанасьевич, 07.06.1967 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Шоркасы, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, на территории землепользования СХПК «Герой», участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:180701 площадью 1,35 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все возражения земельного участка прошу направлять по адресу доверенного лица: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Горького, д. 28 Маринкину Валериану Игоревичу ценным письмом с вложением.

**ООО «Обряд» оказывает следующие виды ритуальных услуг:**

**- изготовление и установка надгробных памятников для участников ВОВ, умерших с 12.06.1990 г.;**

**- изготовление и установка памятников для других категорий умерших граждан. Хранение памятников до начала сезона установка бесплатно;**

**- реализует ритуальные принадлежности: фотокерамики от 300 руб., ограды от 460 руб. п/м, столы, кресты от 450 руб., венки от 150 руб., гробы от 960 руб., типовые памятники от 3900 руб.**

**Обращаться по адресу: с. Моргауши, здание «Баня», вход с торца или по тел.: 8-906-383-62-08, 62-5-55 (домашний) после 17-00 часов. 2-2.**

**ОАО «Моргаушский кирпичный завод» реализует кирпич керамический по сниженным ценам:**

**М-100 – 6136 руб. за 1000 шт.;**
**М-125 – 7139 руб. за 1000 шт.;**
**М-150 – 7965 руб. за 1000 шт.**
**Предусмотрены скидки до 10 процентов.**
**Тел.: 62-6-38, 62-1-77. 3-4.**

**ГУП ЧР «Птицефабрика «Моргаушская» реализует населению кур-несушек «хайсекс-белый» в возрасте 18 месяцев по цене 60 руб./голову.**
**Тел. для справок: 8(83541)65-2-48. 2-5.**

**АНТИКРИЗИСНАЯ АКЦИЯ !!!**



Нетбуки за 12 тысяч. Компьютер с 19 дюймовым жк монитором и колонками за 12,5 тысяч рублей.

Льготный кредит на компьютерную технику по президентской программе «Компьютер в каждый дом». Все это рядом с санэпидстанцией в салоне «Компьютеры».

Телефоны: 62-9-30, 8-919-651-53-33 или на сайте www.nix.ru

**2-3.**

**ОАО «Кирпичный завод «Цивильский» реализует кирпич керамический 5 видов:**

**одинарный пустотелый - 6,00**
**одинарный с 10 пустотами - 6,50**
**одинарный полнотелый - 7,00**
**утолщенный полнотелый - 7,00**
**утолщенный с 10 пустотами - 7,5**
**Цены действуют с 10.04.2009 по 10.05.2009г. Оптовикам дополнительные скидки.**
**Тел. для справок: 8-903-346-54-25 Татьяна Алексеевна**
**8-927-847-75-98 Юрий Алексеевич.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные и необрезные), брус любого сечения, подтоварник. Изготовим на заказ срубы бань, беседки любого размера. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84, с. Моргауши. 1-2.**

**Сдается в аренду земельный участок 0,2 га чернозёма в районе плодокомбината.**
**Тел.: 8-927-846-12-57. 1-3.**

**Çĕр сутатăп: 21,5 сот., тел.: 8-927-850-29-24; 24,5 сот., тел.: 62-5-06, 8-906-385-31-31.**

**Срочно куплю одно- или двухкомнатную квартиру. Тел.: 8-927-858-38-35, спросить Зою.**

Муркаш райпо коллективĕ кунта водитель пулса ĕçлекен Евгений Михайлович Бояриновăн тăван

**АППĂШĔ**

вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 21.04.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3860.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.